ТĔПЧĔВ



# Кун çути. Каç сасси. Юрату...

«Турă панă вăрăм çулăн вĕçĕ хăварт çывхарать», тенĕччĕ пĕр сăввинче Виталий Шемекеев сăвăç. Ун тĕлне «Турă панă вăрăм çулăн вĕçĕ» тухрĕ ĕнтĕ. Вăл хăйĕн тухăçлă çитмĕл çулне те кĕтсе илеймерĕ – тăвата çул каялла çĕре кĕчĕ. Пахчаçăсен «Хĕвел» ятлă юлташлăхĕнче пирĕн пахчасем урам урлах. «Çурхи юр» сăввисен кĕнеки пахчарах тăхăр çул хушши упранчĕ. Ăна вăл мана, иксĕмĕр ентеш те, юлташ та пулнă май, сăвăласа çырса парнеленĕччĕ. Эпир – комсомольскисем, вăл Аслă Каçалтанччĕ, эпĕ – Нĕркеçрен. Юн тĕслĕ ручкипе кĕнекине çапла çырса панăччĕ: «... Тӳпе хĕвелĕ ăшшăн култăр, пуласлăху сан çутă пултăр! Çу уйăхĕ, 1997 ç.»

Сăвă майне-шывне лайăх пĕлекен Т.И.Иванов-Таçук пултарулăхне тĕпчесе Николай Теветкел «Хыпарта» 2005 çулта çапăннă «Çывăх та çухалман сăнар» статйинче хальхи чăваш поэзийĕ пирки пăшăрханса çапла çырать: «Çав тери пĕчĕкленсе кайрĕ пултару пахчи. Çав пахчана поэзи çимĕçĕ тесе темĕн те пĕр пăрахма пуçларăмăр. Вулатăн та – хăшĕ-пĕри сăвă кĕвелĕхне те тупаймасть. Мĕн тăвăн ĕнтĕ!..»

Виталий Шемекеев – хăйне тур панă асама тивĕçлипе тытса пынă сăвăç. Ун поэзине пахалăх ытамне кĕртсе тĕшĕлесен çакна каламалла: В.Шемекеевăн лирикăллă геройĕ вăл тĕрлĕ халăхсене пĕрлештерсе тăракан йышри чăваш пулса пурăнакан çын. Ăна поэтпа хăйне те пĕр пек теме пулать. Акă, «Çурхи юр» кĕнекери «Чăвашла сире эп саламлатăп» ярăма кĕнĕ «Пысăк Çĕр пĕчĕк – чăвашсăр» сăвă:

Эп чăваш пулса çуралнă,
манăн йăхăм авалтан
пурнăçа çапла ăнланнă:
пурнăç – çăкăрпа тăван,
çăкăр – хамăрăн тартан,

Çавăнпа нумай тарланă
пуртăпа та сухапа.

Телее ӗçре шыранӑ,
утнӑ хамӑрӑн çулпа.

Ӗçлӗ çыншӑн çӗр ыр чунлӑ,
шеллемест мул-туприне.
Çӗр ӗçченӗ эпӗр пулнӑ,
çӗр ӗçченӗ ӗмӗрне.

Çавӑнпа каппайланмасӑр
калани йӑнӑш пулмасть:
пысӑк Çӗр пӗчӗк – чӑвашсӑр,
паян кун та пурӑнмасть.

Пурӑнмасть, мӗн-ма тесессӗн
эпӗр Çӗр тӑшманӗ мар.
Татӑлсан пирӗн тымар,–
чӑвашсем вилсе пӗтсессӗн,–
çаврӑнсан та Çӗр çаплах,
чухӑнланӗ вӑл пайтах.

Чухӑнланӗ ыр йӑлаллӑ
авалхи йӑх çухалсан.
Чӑвашла хитре янранӑ
юрӑ-кӗвӗсӗр юлсан.

Çӗршӗн кашни халӑх кирлӗ,
Уншӑн кашниех тӑван.
Эп – чӑваш, ман халӑх мирлӗ,
пирӗн пурнӑç – çӑкӑртан,
çӑкӑр – хамӑрӑн тӑван.

Çӗршывра туслӑх арканнӑшӑн пӑшӑрханать поэт:

«Çӗр çине таврӑнсан пысӑк
туслӑх ыран,
Чӑваша аякри хӑнасем пухӑнсан
чӑвашла нӳхрепри чӑвашла сӑрине
чӑвашла ӑсса лартӑр сӗтелваррине...

Йӳç хӑмлаллӑ, шур кӑпӑклӑ
ырӑ сӑра
чӑрмантармӗ çынна пурӑнма
туслӑхра».

Чӑваша мухтани, чӑваша килӗштерни унӑн пайтах сӑввисенче:

«Чӑваш çӗршывӗн чӑвашла
илемӗ –
кашни чӑвашӑн ырӑ ӗçӗнче».

Виталий Шемекеев поэзи пахчине, Николай Теветкел калашле, «темӗн те пӗр пӑрахмасть», унӑн, чӑваш ачин, чун тӗпелӗнче – чӑваш ачисене пил панӑ сӑмах:

«Çырла пахчи евӗр пуян чӗлхене
юратӑр, чӑваш ачисем, ӗмӗрне!
Юратӑр ӑна çын çинче, кил-çуртра,
юратӑр ӑна паянхи юрӑра.
Юратӑр ӑна ӗненсе те шанса,
чунпа, чӗрепе яланах ыр сунса!
Чӗлхе те вара улталамӗ сире,–
вӑл пирӗн тӗрек пулӗ çут тӗнчере!»

Кулленхи пурнӑç пулӑмӗсене хӑй чӗри витӗр кӑларса вулаканпа канашлакан çынна социаллӑ çыравçӑ теççӗ. Эпӗ, хӑю çитерсе, Виталий Шемекеева та вӗсен шутне кӗртӗттӗм. Унӑн сисӗмлӗ шухӑшӗпе чӗри пурнӑç ларутӑрӑвӗн кашни хусканӑвӗпех пӑшӑрханать. Сӑвӑçӑн чун тӗпелӗнче – ыйтусем, ыйтусем, ыйтусем:

«Ма пин шухӑш пӑтранчӑк пуçра?
*Ма сӳнеççӗ таса çӑлтӑрсем?*
*Шанӑç те мал енче, те хыçра?*
Ыйтусем, ыйтусем, ыйтусем...

Ма калать-ши этем: «Эп – хуçа!»
Çук-шим урӑхларах сӑмахсем?
Виличчен çавӑраççӗ пуçа
нихӑçан та вилмен ыйтусем».

Сӑввисенчи вулакан асне лармалли çывӑх мелӗ унӑн ӳкерчӗклӗ сӑнар. Акӑ:

«– Эсӗ пуян-и? –
ыйтаççӗ манран.
– Çук, – тетӗп эпӗ, –
çук, пуян мар.
– Нихӑçан та
пулса та курман-и?
– Курнӑ, – тетӗп эпӗ, –
питӗ те пуян пулса курнӑ.
– Хӑçан?
– Çичӗ çула çитиччен,
ун чухне ман атте те,
анне те чӗрӗ пулнӑ».

Литература çулӗ çине тӑма вӑл

малтан çăкăр ĕçлесе илме пултарнинчен тытăннă. Вăтам шкул пĕтерне хыççăн пулас ятлă сăваç Пермь облаçĕнчи Лысьва хулинчи профессипе техника училищине пĕлӳ пухма кайса кĕрет. 1963 çулччен металлурги заводĕнче ĕçлет. Каярахпа вара çырулăх ĕçне çывăхарах ĕçсенче тăрмашать: район хаçачĕсенче, Чăваш писателĕсен Союзĕнче вăй хурать. Поэтăн пĕрремĕш сăвви шăп та лăп аллă çул каялла, 1957 çулта, «Тăван Атăл» журналта пичетленнĕ. Кĕнекисене вăл сăввисем пиçсе çитсен кăна кăларнă: «Пурнăçпа ĕмĕт», «Çăлтăрсен çăл куçĕ», «Çĕр çинчех ман кил». Прозăра та ĕçлесе пăхрĕ В.Шемекеев. «Тăван Атăл» журналта унăн самай сулмаклă «Ах, тăварлă-çке юрату куççулĕ» лирикăллă повеçĕ çапăннăччĕ. Çырни халлĕн, тăрăшни халлĕн патшалăхран укçи-тенкине те илеймерĕ пулас. Çыракансем тĕлне вăхăчĕ çапла хĕсĕкрех килчĕ. Паллах, ку хайлав кĕнеке майлăн та кун çути кураймарĕ. Унăн пултарулăхне пухса кăларасси ӳлĕм ĕçĕ.

Поэт чĕри ырра, ырана яри уçă:

«Уйăх пиçнĕ кавăн пек сап-сар,
çăлтăрсем пуçтарăннă вĕçме.
Çĕр çинче ним чул та хăруш мар
пурăнма,
кулма,
ĕмĕтленме.
Ма тесен никамшăн та çӳнмен
çутă ĕмĕт ăшă чĕрере».

Поэт тĕпелĕнче – çынлăх:

«Çынна вăй кирлĕ ĕçлеме,
ĕç панă савнăçа туйма,
çунат сарса çӳле вĕçме,
кун-çул илемĕпе пуйма.

Çынна вăй кирлĕ пурăнма,
чарусăр ĕмĕт çуратма;
çынна вăй кирлĕ Çын пулма,
хăй çынлăхне таса тытма».

Самани те Раççейре хальхаççăн пĕр вăхăт пăтранса тăчĕ. Йывăр çăкпа утакан çынна сасартăках тĕпсĕр çырмана тĕксе янă пекех пулса тухрĕ ку. Çĕршывăмăрти самана халь йĕркене кĕрсе пырать пек-ха: тĕксе янă çынни тĕпсĕр çырмаран упаленсе тухрĕ пулинех. Çакăн пек вăхăтшăн поэт чунĕ те ыратать.

Раççее поэт «сумсăр пасарпа» танлаштарать:

«Вăхăт иртрĕ те – лайăх куратпăр,
демократи вăл – митинг çеç мар.
Ĕçĕн пуçĕ-йĕрне аркататпăр,
ĕçлеме пăрахса йăлт сутатпăр,
пулса тăчĕ Раççей халь пасар».

Тапхăрне кура чăваш сăваçисем те çав тапхăра сăввисене халаллаç. П.Хусанкайăн «Çирĕм улттăн», «Магнит ту», вăрçă çулĕсенчи «Таня» тата ытти хайлавĕсем тăрăх та эпир хамăр çĕршывăн историн тапхăрĕсене курăмлатпăр, çавсен шутне В.Рзайăн, Уйап Мишшин, Ухсай Яккăвĕн, Макар Хурин, маларах – Иван Ахахăн, каярах – А.Лукинăн тата ытти нумай-нумай чăваш çыруллă сăмахçисен хайлавĕсене кĕртмелле. Эпир çакна куратпăр: В.Шемекеев та чăваш литературинчи аслă юлташĕсем тытнă çул-йĕртен пăрăнмасăр произведенийĕсене кăварлать. Шăпчăкăн хитре юррипе çеç киленсе лармасть сăваç, уншăн пурнăçăн кашни юравлах туман пулăмĕ – поэзи картине кĕртмелли хаклав. Чун-чĕре хаклавĕ. Тарăху хаклавĕ:

«Приватизаци – çын çуратнă çул,
мĕн çеç сутса илмест этем паян.
Юрать-ха хĕвеле сутма май çук,
Турри çынна çак ирĕке паман.

Парас пулсан – иккĕленӳ юлмасть:
сутмашкăн хĕвеле çын вăтанмасть,
сутса ярать пĕр шелсĕр уйăха,
сутать вăл сывлăша та сывлăха.

Сутать – туянаканĕ тупăнсан,
таса укçа миххийĕ кăтартсан.

Сутать вăл – сутнă пек чунне, чысне –
хăй хыççăн юлакан йăхсен кунне.

Приватизаци – çын суйланă çул,
паян кашни ĕмĕтсĕр пуясшăн.
Юрать Турра хăйне сутма май çук,
ăна та сутнă пулĕччĕç – укçашăн.

Тĕнчипе паллă Омар Хаям хĕвел тухăç поэчĕ пек тăватшар йĕркен кăшкарланă йĕркисем те пур унăн:

«Ăш ыйхăран вĕлтлетнĕ
ырă тĕлĕк,–
текех сана кураймăп нихăçан та.
Паянхи кунăм, пулăн эс те – ĕлĕк,
иртсе çухалĕ çамрăклăхăм ман та».

***

«Халь калаçса-кулса
савăнмасассăн,
хăçан тата кулса калаçмалла?
Тăпра айне пĕрре кĕрсе выртсассăн
яланлăхах çыртса лартан шăла».

***

«Çывăх çула кĕске туса ан тух,
çул мĕнлине утмасăр пĕлейместĕн.
Чи çывăха тухан та тепĕр чух
ĕмĕрĕпе утсан та çитейместĕн».

***

«Ах! Çӳç шуралать, хура çӳç
шуралать,
çакна çывăх тус та, тăшман та
курать.
Чĕре ывăнать, ах, чĕре ывăнать!
Çакна чи малтан вилĕм çеç
асăрхать».

***

«Çĕнтертĕр пулсан çын – тĕрĕслĕх
çĕнтертĕр!
Çапла çĕнтерсе çеç, çынсем,
çын пулар.
Мана тус çеç мар, ман тăшман та
ĕнентĕр.
Калатăр: «Унпа тытăçма
намăс мар».

***

«Мĕн тери асаплă пулмалла
пĕрчĕрен пучах таран ӳсме.
Ман шутпа, çакна ас тумалла
çăкăра пуçланă чух çиме».

В.Шемекеев Шупашкара Муркаш районĕнчи Москакассинчен çемйипе куçса килчĕ. Вăл пĕр вăхăт ку районта хаçат редакторĕнче те ĕçлесе пăхрĕ.

Виталий Дмитриевич Чăваш писателĕсен союзĕн илемлĕ литературăна пропагандăлакан бюрора сотрудникре тăрмашатчĕ. Çавăн чухне унпа пĕрле республикăри вулакансем патне тăтăш туха-туха кĕме пуçларăмăр. Хăй çырнă сăввисене вăл темĕн капаш пăхмасăр пĕлетчĕ. Каласса вĕсене ĕнерсе, сăмса айĕн мар, туйăмпа, юратса калатчĕ. Сайраччĕ ун пек сăвăçсем пирĕн хушшăмăрта. Çырнине хут тăрăх сĕрлесе тухма пĕлетчĕç-ха, чунпа шăрантарма вара – Виталие çитекенни шӳтле япаласем çыракан Александр Кăлкан пулчĕ пулинех. Мĕн тунмалли, халăх умне тухсан мăрласа мар, халăхĕпе чунтан калаçмалла çав. Сăввисене те Виталий Шемекеев чунпа çыратчĕ, асра çапăнса юлмалăх. Нумай шухăшласа çӳретчĕ пулмалла хут çине çырса хуриччен. Астăватăп, «Хатĕр пул» журнала çĕнĕрен кăларма тытăнма те хĕрĕх пин, те аллă пин тираж кирлĕччĕ, унсăрăн журнал ĕмĕрĕ тăсăласси асра та çук. Çавăн чухне эпир Патăрьел районне командировкăна кайсаттăмăр. Тепри Леонид Маяксемччĕ. Хĕллеччĕ, сивĕччĕ ун чух. Тахăш самантра, сĕнксе илнĕ хушăра, пăхатпăр – Шемекеев çук. Çутăласси те катара-ха. Пăртакран юлташăмăр таврăнчĕ. Вăл иккен яланах çĕрле çапла тухса кайса сăвăсен танатинче çӳрет... Çапла, пултарулăх ĕçĕ кашниннех расна. Ун сăввисене вара пухăннисем каçса кайсах итлетчĕç. Уйрăмах хĕрсемпе каччăсем. Итлемесен те майĕ çук. Ара, йĕркисем чĕре варнех кĕрсе вырнаçаççĕ-çке:

Юрату, ĕненӳ тата шанчăк –
вĕсенчен нимле мул пысăк мар.

Юрату улталарĕ те манчĕ,
ĕненӳ чĕртеймерĕ кăвар.

Ĕмĕтсем çурхи юр пек шыв пулчĕç,
юлашки хут куçра выляса
сар хĕвел çутинче алă сулчĕç,
юхса кайрĕç пиртен шавласа.

Шанчăкран эс те, эп те хăратпăр,
те юрать, те май çук тек шанма?
Сурана тăварпа кастаратпăр,
ăс çитмест урăхла сывлама.

Пĕтĕмпех тĕссĕрленчĕ, тăпланчĕ,
хăш енне сулăнсассăн та çул.
Юрату, ĕненӳ тата шанчăк,–
вĕсенчен пысăк мул пурпĕр çук.

Нарспипе Сетнер юратăвĕ чăваш ачисемшĕн ĕмĕртен ĕмĕре туртăнмалли кĕтрет. Илем енне туртăнмалли сăнар-асам. Аслă поэтăмăр хайлавĕ пирĕншĕн, чăваш çыннисемшĕн – пурнăç пуçламăшĕ те, вĕçĕ те. Çĕр çине килнĕ чăваш этемĕн ĕмĕрлĕх çаврийĕ, эппин. Пӳкле илем çаврийĕ.

«Нарспи+Сетнер=юрату», –
куçать ĕмĕртен ĕмĕре.
Паян санăн çăмăл яту
чи çылăхсăр ят тĕнчере.

Куçу хурлăхан пек хура,
сăну уйăхран лăпкăрах.
Анчах лăпкă мар сан чунра,
чĕрен те асапĕ пайтах.

Шух çил пек тухан та ума
йăлтах çавăран, пăтратан.
Эп мантăм кулса савăнма,
хăюлăх çухалчĕ куçран.

Ан пул эс манпа çич ютла,
мана хам ятпа юнашар
сан пурнăç пек хăтлă ятна,
тархасшăн, çырма ирĕк пар.

Анчах сан асамлă çуту
каллех ман умран çухалать.
«Нарспи+Сетнер=юрату», –
тесе урăх каччă çырать.

Эпир пурте Хĕвелпе Çĕр ачисем, Çут тĕнче сасси. Çĕр çинче юрату хуçаланать. Ĕрчевлĕх. Юратăва хӳтĕлет поэт. Этеме этем шайне çĕклекен, ăна сăваплакан Юратăва. Поэт çырмалăхшăн кăна чĕри хĕлĕхĕсене ĕнĕрмест, вăл çав хĕлĕхсен сассисемпе тулли. Пархатарлă та. Çынлăхлă. Çывăх юлташлă.

Ун менелникĕ тĕлне хатĕрленĕ кĕске хайлавăмра эпĕ поэт сăввисене ятарласа курттăмлăрах илсе кăтартрăм. Куçа тирĕнмеççĕ вĕсем, кăмăла çырлахуллă ларса пыраççĕ. Вĕсен имне вулакансем те тата тепĕр хут активсе пăхчăр терĕм. Виталий Шемекеев Чăваш-Раççей поэчĕ, халăхĕ тиенĕ çĕклеме тивĕçлипе чăн-чăн граждан пек пĕтĕм пурнăçĕ тăршшипе йăтса пынă çын. Тӳсĕмлĕ çын. Вăл хисеплĕ ятсемшĕн çунса-пăтранса пурăнмарĕ, лăпкăн ĕçлерĕ, кун çутинче, каç сассинчи ЮРАТĂВА мухтарĕ, тӳрĕ пурăнчĕ:

Эп пĕлеймĕп: мĕскер вăл ĕмĕрлĕх? –
ун виçи тухмасан ман тĕле.
Пурпĕрех эс пурри вăл – тĕрĕслĕх,
пурпĕрех эс пурри вăл – телей.

Çăлтăрсем тĕттĕмре те курăнĕç,
тинкерме çитейсен хăвату.
Çĕр çинче эс пурри вăл – пурăнăç.
Кун çути. Каç сасси. Юрату.

Виталий Шемекеев поэзийĕ «Çурхи юр» пек кĕрлесе-шавласа иртсе ан кайтăр. «Тура панă вăрăм çулăн вĕçĕ хăвăрт çывхарать» тенĕ пек вĕлтлетсе кăна ан ирттĕр. Чăннипех те çут тĕнчене илемĕпе килентертĕр, ИЛЕМĔ вăрăм пултăр!

**Хветĕр АГИВЕР**